28-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус

1945
ДЕКАБРЬ
16
ВЫРСАРНИКУН
244 (6995) №

ЧӐВАШ КОММУНИ

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховнӑй Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаçачӗ

Тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене юсанӑ çӗрте социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса ярар! Тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене срокчен тата пысӑк пахалӑхпа юсаса пӗтерер!

Краснодар крайӗнчи Ново-Титаровская районӗнчи Старо-Мышастовски МТС коллективӗ Совет Союзӗнчи мӗнпур трактористсене, комбайнерсене, механиксене, юсакан рабочисене, агрономсене, Совет Союзӗнчи МТС-сен тата совхозсен ертсе пыракан работникӗсене

ЧӖНСЕ КАЛАНИ

Хаклӑ юлташсем!

Тӑватӑ çул хушши пынӑ Отечественнӑй вӑрçӑ пӗтнӗ хыççӑн эпир ялхуçалӑх çулне пӗрремӗш хут мирлӗ условисенче ӗçлерӗмӗр. Пирӗн МТС коллективӗ, нимӗçсемпе японецсен агрессорӗсене çаплӑн çӗнтернипе хавхаланса, кӑçал производствӑра лайӑх çитӗнӳсем турӗ. Пирӗн колхозсем вӑйлӑ тырпул туса илчӗç, государствӑна тӗштырӑ памалли плана срокчен тултарчӗç. МТС ӗçлесе парӑшӑн тӳлемелли натуроплатӑна ытлашшипех тӳлесе татрӗç тата Хӗрлӗ Çар фондне 31.000 пӑт тырӑ хыврӗç.

Çак хисеплӗ ӗçре пирӗн МТС чылай пысӑк вырӑн йышӑнчӗ. Ноябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне эпир тракторпа тумалли ӗçсен планне 130 процент тултартӑмӑр, 15 лаша вӑйлӗ кашни тракторпа, çемçе суха шучӗпе шутласан, 610 гектар сухаларӑмӑр, планра 475 гектар сухалама палӑртса хунӑ пулнӑ. Тракторпа тумалли ӗçсен планне пур ӗçсем тӗлӗшпе те чылай иртерсе тултартӑмӑр. Комсомолецсемпе çамрӑксен Тимченко юлташ ертсе пыракан трактор бригади хӑйӗн çулталӑкри планне 223 процент тултарчӗ, 2.518 килограмм горючи перекетлесе хӑварчӗ; Харченко юлташӑн бригади çулталӑкри плана 195 процент тултарчӗ, 1.843 килограмм горючи перекетлесе хӑварчӗ. Комбайнер Гречко юлташ 10 кун хушшинче «Коммунар» комбайнпа 497 гектар пучахлӑ тырӑ вырса пухрӗ, комбайнер Ковалев юлташ «Сталинец» комбайнпа 16 кун хушшинче 544 гектар тырӑ вырса пуçтарчӗ. Трактористка Высоцкая юлташ «Универсал» тракторпа, çемçе суха шучӗпе шутласан, 441 гектар сухаларӗ. Пирӗн ытти нумай трактористсемпе комбайнерсем те çавӑн пекех тухӑçлӑн ӗçлерӗç.

Çак çитӗнӳсене эпир чи малтан пирӗн МТС-ра 1944 çулхи кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра тракторсемпе комбайнсене ӑнӑçлӑн юсаса пӗтернипе пула турӑмӑр. Эпир мӗнпур тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене вӑхӑтра тата лайӑх юсаса хунӑччӗ, вӗсене ялхуçалӑх ӗçӗсене тунӑ вӑхӑтра юсавлӑн тытса тӑнӑччӗ. Пирӗн МТС çуракине тухиччен ялхуçалӑх ӗçӗсене тума лайӑх хатӗрленсе çитнӗччӗ. 1946 çулта машинно-тракторнӑй станцисен тата тухӑçлӑрах ӗçлемелле, вӑрçӑ кӳнӗ сурансене часрах тӳрлетмелле.

Ялхуçалӑхне ура çине тӑратса малалла аталантарас ӗçре машинно-тракторнӑй станцисем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраççӗ. Пирӗн МТС коллективӗ, 1946 çулта кӑтартуллӑн ӗçлесе, хамӑр колхозсенче тырӑсене вӑрçӑччченхи чухлех акма тата кашни гектартан 120-шер пӑт тырӑ пухса илме йышӑнчӗ. Хальхи вӑхӑтра пирӗн çӗршывра тӗнчери чи демократиллӗ Сталинла Конституци тӑрӑх СССР Верховнӑй Советне суйлама хатӗрленес ӗç пуçланчӗ. Çав суйлава хатӗрленнипе пирӗн МТС коллективӗ тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене срокчен тата пысӑк пахалӑхпа юсаса пӗтернипе паллӑ тума йышӑнчӗ, тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене вӑхӑтра тата лайӑх юсани — çуракине хатӗрленмелли тата ӑна туса ирттермелли тӗп услови пулса тӑрать.

Тракторсене, сеялкӑсене, плугсене, культиваторсене IV-мӗш кварталта юсамалли плана эпир пӗр уйӑх малтан пурнӑçларӑмӑр. Тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене юсанӑ çӗрти çак малтанхи çитӗнӗве эпир юсакан рабочисен ӗçне тӗрӗс организациленипе пула турӑмӑр. Эпир машинӑсене малтан хатӗрлесе хунӑ график тӑрӑх юсаттаратпӑр, кашни машинӑн çитменлӗхӗсене ведомость çине çырса хуратпӑр, юсамалли пайсене вӑхӑтра тата тӗплӗн юсаса çӗнететпӗр. Юсакан рабочисем валли пурӑнма лайӑх условисем туса панӑ, вӗсене пӗрле апатлантараççӗ. Юсакан рабочисене куллен хаçатсем вуласа параççӗ, мастерскойсенче сменӑри задание мӗн чухлӗ тултарнине кӑтартакан цифрӑсем çакса хураççӗ. Юсакан рабочисем, пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗçлесе, хӑйсен нормисене иртерсе тултарса пыраççӗ. Токарь Гончаров юлташ хӑйӗн заданийӗсене 250—300 процент, слесарь Горенко юлташ—200 процент, тимӗрçӗ Мирный юлташ—250 процент тултарса пырать.

Пирӗн машинно-тракторнӑй станцин коллективӗ Совет Союзӗнчи мӗнпур трактористсене, комбайнерсене, механиксене, юсакан рабочисене, агрономсене, МТС-сен тата совхозсемпе колхозсен руководителӗсене тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене кӗркуннехипе хӗллехи вӑхӑтра срокчен тата пысӑк пахалӑхпа юсаса пӗтерессишӗн Пӗтӗм Союзӗпе социализмлӑ ӑмӑрту пуçласа яма чӗнет.

Социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, Старо-Мышастовски МТС коллективӗ çакӑн пек обязательствӑсем илет:

1. Тракторсене, сухаламалли, сӳрелемелли тата акмалли инвентаре кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра юсамалли плана 1946 çулхи февралӗн 10-мӗшӗ тӗлне, урӑхла каласан, СССР Верховнӑй Советне суйламалли кун тӗлне, «отлично» тата «лайӑх» юсаса пӗтермелле.

2. Комбайнсене, молотилкӑсене, локомобильсене тата тырӑ пухса кӗртмелли ытти машинӑсене 1946 çулхи апрелӗн 10-мӗшӗ тӗлне юсаса пӗтерсе, ӗçе тухма хатӗр туса хумалла.

3. Тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене юсанӑ çӗрте укçа-тенкӗ 10 процентран кая мар перекетлесе хӑвармалла.

4. МТС мастерскойӗнче 10 пин тенкӗлӗх запаслӑ пайсем юсаса çӗнетмелле тата çӗнӗрен туса хатӗрлемелле.

5. Тракторсене, комбайнсене тата ялхуçалӑх машинисене хӗллехи вӑхӑтра кӑтартуллӑн сыхласа усрамалла.

6. Хӗллехи вӑхӑтра кашни трактор бригадине трактора техника енчен пӑхса тӑма кирлӗ инструментсем памалла. Хире тухас умӗн çавӑн пек инструментсене кашни тракториста хӑйне памалла.

7. Куçса çӳрекен мастерскойсене тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене хиртех юсама кирлӗ инструментсемпе хатӗрсем çителӗклӗ тупса памалла.

8. Хирти ӗçсем пуçланиччен кашни трактор бригадине лайӑх вагон туса памалла, унта кирлӗ инвентарь пулмалла.

9. 1946 çулхи февралӗн 1-мӗшӗ тӗлне трактор бригадисен горючи усрамалли 10 подвалне, тракторсене хирте юсама тунӑ 10 лупасайне, тракторсене горючи парса çӳремелли 10 урапине юсаса пӗтермелле.

10. МТС çумӗнчи механизаторла шкулпа курсра 90 тракторист, 10 бригадир тата 15 комбайнер вӗрентсе хатӗрлемелле.

11. Лаша туртакан инвентаре—плугсене, сеялкӑсене, культиваторсене, сӳресене, косилкӑсене тата жнейкӑсене — вӑхӑтра юсас ӗçре колхозсене пулӑшмалла.

Юлташсем—машинно-тракторнӑй станцисемпе совхозсен трактористсем, комбайнерӗсем тата ытти работникӗсем! СССР Верховнӑй Советне суйлама хатӗрленнӗ вӑхӑтра вӑя шеллемесӗр ӗçлесе, эпир мӗн тери пӗтӗçнине, большевиксен партине тата аслӑ Сталина чунтан-чӗререн парӑннине кӑтартса парар. СССР Верховнӑй Советне суйланине производствӑра çӗнӗ çитӗнӳсем тунипе паллӑ тӑвар!

Тракторсене, ялхуçалӑх машинисене срокчен тата лайӑх юсаса пӗтерессишӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑрах сарса ярар!

Сывӑ пултӑр пирӗн аслӑ Тӑван çӗршыв!

Сывӑ пултӑр пирӗн çӗнтерӳсене организацилекенӗ тата хавхалантаракан — коммунистсен партийӗпе унӑн аслӑ çулпуçӗ Сталин!

Старо-Мышастовски МТС работникӗсен пӗрлехи пухӑвӗ хушнипе çаксем алӑ пуснӑ:

МТС директорӗ И. Г. ЯРОВОЙ.
МТС-ӑн старши механикӗ Г. К. НОВОБРАНЦЕВ.
МТС-ри парторганизаци секретарӗ Д. К. КАЛЕНОВ.
Мастерской заведующийӗ А. С. НЕСТЕРЕНКО.
Токарь И. К. ГОНЧАРОВ.
Слесарь В. К. ГОРЕНКО.
Юсав ушкӑнӗсен бригадирӗсем: И. П. БОГДАНОВ, Г. А. ТИМЧЕНКО, П. Я. ХАРЧЕНКО.
Трактористсем: А. ВЫСОЦКАЯ, А. КИСЛИЦА, М. Ус.
Колхоз председателӗсем: Н. Ф. КРАВЦОВ, П. Н. СИЛИЩЕВ, И. П. ЧАПЛЫГИНА.

СССР Верховный Советне суйлама Шупашкар хулинче тунӑ суйлав участокӗсенчи суйлав комиссисен составне çирӗплетесси çинчен

Ӗçсынни депутачӗсен Шупашкар хула Совет исполкомӗ йышӑннӑ решени

«СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 51-мӗшпе 52-мӗш статйисем тӑрӑх. СССР Верховный Советне суйлама Шупашкар хулинче тунӑ суйлав участокӗсенчи суйлав комиссисен çак составне çирӗплетес:

1-МӖШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийӗн председателӗ Павел Тимофеевич **Тимофеев** — Шупашкарти опытлӑ вӑрман хуçалӑх коллективӗнчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Нина Яковлевна **Долгушина**—Чӑвашсен ялхуçалӑх институтӗнчи комсомол организацийӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн секретарӗ Лидия Николаевна **Баранова**—14-мӗш номерлӗ ача садӗнче ӗçлекенсен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Наталия Ивановна **Смолина**—хӗрачасен 2-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗнчи учительсен коллективӗнчен.

Елена Александровна **Ступалова**—Шупашкарти опытлӑ вӑрман хуçалӑхӗн коллективӗнчен.

Таисия Михайловна **Крылова** — Гострудсберкасса управленийӗн коллективӗнчен.

Зоя Степановна **Степанова**—Чӑвашсен государство педагогика институтӗнчи истори факультечӗн 1-мӗш курсӗнче вӗренекен студентсен коллективӗнчен.

Моисей Спиридонович **Спиридонов** — Чӑваш совет художникӗсен союзӗнчен.

Сергей Григорьевич **Андреев**—Чӑвашсен государство педагогика институтӗнчи научнӑй работниксен коллективӗнчен.

2-МӖШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийӗн председателӗ Адриан Степанович **Тюшкин**—Шупашкар пристанӗнчи парти организацийӗнчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Нина Петровна **Ломоносова**—НКВД государство архивӗнчи служащисен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн секретарӗ Аркадий Федорович **Минаев**—арçын ачасен 2-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗнчи парторганизацинчен.

Участокри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Зоя Николаевна **Антюшева**—учительсен Союзӗн хулари комитетӗнчен.

Анна Александровна **Агеева**—табак фабрикинчи рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Александр Никифорович **Никифоров** — государствӑн кирпӗч заводӗнчи рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Нина Андреевна **Михайлова**—арçын ачасен 2-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗнчи комсомол организацийӗнчен.

Николай Петрович **Минеев**—Водосветри рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Таисия Дмитриевна **Сергеева** — эрех заводӗн коллективӗнчен.

3-МӖШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийӗн председателӗ Александр Сергеевич **Толмачев**—арçын ачасен 2-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗнчи учительсен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Антонина Борисовна **Кардавильцева**—хӗрачасен 2-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗнчи учительсен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн секретарӗ Елена Васильевна **Вдовина**—Чӑваш АССР Совнаркомӗ çумӗнчи лесоохранӑпа лесонасаждени управленийӗнче ӗçлекен рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Мариамма Михайловна **Иванова** — табак фабрикинчи рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Антонина Александровна **Ганина**—хуласем хушшинчи телефон станцийӗн коллективӗнчен.

Александр Иринархович **Воронов** — больницӑн инфекционнӑй отделенийӗнче ӗçлекенсен коллективӗнчен.

Зоя Константиновна **Крашенинникова** —Шупашкар больницинче ӗçлекенсен коллективӗнчен.

4-МӖШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийӗн председателӗ Арсентий Федорович **Мишин**—Аптекоуправленири рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Нина Михайловна **Николаева**—Поликлиникӑри профсоюз организацийӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн секретарӗ Анна Григорьевна **Бурцева**—Партстационарта ӗçлекенсен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Тамара Александровна **Козлова**—Чӑвашсен ялхуçалӑх институтӗнчи комсомол организацийӗнчен.

Евгения Петровна **Салтыкова**—Чӑваш АССР Союзпечат отделӗнче тата çыхӑну управленийӗнче ӗçлекенсен коллективӗнчен.

Иустиния Гурьевна **Гурьева**—чӑлха фабрикинчи рабочисемпе служащисен тата инженерсемпе техниксен коллективӗнчен.

Клавдия Васильевна **Астраханцева** — Кожно-венерически диспансерта ӗçлекенсен коллективӗнчен.

5-МӖШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийӗн председателӗ Сидор Васильевич **Васильев** — Чӑваш АССР Çӗрӗç Халӑх Комиссариатӗнчи парти организацийӗнчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Клавдия Ивановна **Сорокина**—хӗрачасен 2-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗнчи учительсен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн секретарӗ Анна Павловна **Муратова** — Чӑваш АССР Сутӗç Халӑх Комиссариатӗнче ӗçлекенсен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Николай Григорьевич **Степанов**—хӗрачасен 2-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗнчи преподавательсен коллективӗнчен.

Мария Осиповна **Карамалькина**—Çыхӑну управленийӗнчи хурал коллективӗнчен.

Фекла Адриановна **Адрианова**—хуласем хушшинчи телефон станцийӗнче ӗçлекен рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Иульяна Николаевна **Николаева**—Чӑвашсен государство пединститутӗнчи литература факультечӗн 1-мӗш курсӗнче вӗренекен студентсенчен.

Константин Иванович **Иванов**—Чебторгри рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Анна Яковлевна **Григорова**—Чӑвашсен государство академи театрӗнчи актерсен коллективӗнчен.

6-МӖШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийӗн председателӗ Юлиана Александровна **Рябушкина**—врачсен научнӑй обществинчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Мария Матвеевна **Тихонова**—Чӑвашсен государство академи театрӗнчи актерсен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн секретарӗ Вера Ивановна **Лебедева**—Чӑваш АССР Совнаркомӗ çумӗнчи промкооперации управленийӗнче ӗçлекенсен коллективӗнчен

Участокри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Наталия Семеновна **Мурзайкина** — пристаньри профсоюз организацийӗнчен.

Александра Степановна **Хазова**—пир-авӑр фабрикинчи рабочисемпе служащисенчен.

Клавдия Димитриевна **Парцевская**—çыхӑну конторинчи комсомол организацийӗнчен.

Анна Ивановна **Петрова**—Центральнӑй библиотекӑра ӗçлекенсен коллективӗнчен.

Василий Михайлович **Большаков**—поликлиникӑри врачсен коллективӗнчен.

Анна Васильевна **Ананьина**—Чӑвашсен государство педагогика институтӗнчи естествоведени факультечӗн 2-мӗш курсӗнче вӗренекен студентсенчен.

7-МӖШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийӗн председателӗ Андрей Демидович **Демидов** — СССР Хатӗрлев Халӑх Комиссариачӗн Чӑваш республикинчи уполномоченнӑйӗ çумӗнчи парти организацийӗнчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Елена Васильевна **Заболотнова** — хӗрачасен 3-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗнчи учительсен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн секретарӗ Сергей Александрович **Андреев** — çыхӑну конторинчи рабочисемпе служащисенчен.

Участокри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Мария Андреевна **Комиссарова**—1-мӗш номерлӗ типографири рабочисемпе служащисенчен.

Татьяна Иосифовна **Александрова** — Ленин ячӗпе тӑракан фабрикӑри комсомол организацийӗнчен.

Пелагея Ивановна **Попова**—Шупашкар вӑрманпромхозӗнчи рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Елизавета Михайловна **Свинцова** — Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссариатӗнчи комсомол организацийӗнчен.

Василий Александрович **Капранов** — «Красный волгарь» колхоз членӗсенчен.

Кузьма Сергеевич **Сергеев**—Чӑваш совет писателӗсен Союзӗнчен.

8-МӖШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийӗн председателӗ Анна Демьяновна **Васильева** — Чӑвашсен трахоматознӑй институтӗнчи врачсен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Анна Николаевна **Васильева**—искусство работникӗсен Союзӗн облаçри комитетӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн секретарӗ Нина Тихоновна **Артемьева** — Чӑвашсен ялхуçалӑх институтӗнчи зоотехника факультечӗн 3-мӗш курсӗнче вӗренекен студентсенчен.

Участокри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Клавдия Дмитриевна **Мишина**—табак фабрикинчи рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Евдокия Степановна **Васюхина**—Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссариатӗнче ӗçлекенсен коллективӗнчен.

Игорь Георгиевич **Павлов**—Водосветри комсомол организацийӗнчен.

Татьяна Герасимовна **Правская**—çыхӑну управленийӗнчи профсоюз организацийӗнчен.

Антонина Зиновьевна **Шульпенкова**—Чӑвашсен трахоматознӑй институтӗнчи профсоюз организацийӗнчен.

Ксения Александровна **Васильева** — Мелькомбинатри рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

9-МӖШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийӗн председателӗ Михаил Алексеевич **Зарубин**—Чӑвашшвейпромсоюзри рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Николай Григорьевич **Григорьев**—Чӑвашсен государство пединститутӗнчи научнӑй работниксенчен.

Участокри суйлав комиссийӗн секретарӗ Александра Ивановна **Скребнова**—СССР Хатӗрлев Халӑх Комиссариачӗн Чӑваш республикинчи уполномоченнӑйӗ патӗнче ӗçлекен рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Петр Васильевич **Ерошин**—Горький—Хусан чугун çул управленийӗнче ӗçлекенсен коллективӗнчен.

Анна Ивановна **Краснощекова**—хӗрачасен 3-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗнчи учительсен коллективӗнчен.

Елизавета Павловна **Екатеринина** — «Вышивка» артельри рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Любовь Ивановна **Зотова**—Чебторгри комсомол организацийӗнчен.

Александра Михайловна **Иванова** — Горький ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксемпе колхозницӑсенчен.

Клавдия Федоровна **Обухова**—Финанспа банк работникӗсен Союзӗн облаçри комитетӗнчен.

10-МӖШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийӗн председателӗ Евдокия Прокопьевна **Прокопьева** —Госбанкри парти организацийӗнчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Александр Кузьмич **Черкашин**—чӑлха фабрикинчи инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн секретарӗ Мария Михайловна **Терентьева** — арçын ачасен 1-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗнчи парти организацийӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Елена Михайловна **Воробьева**—пӗр заводри конструкторски тата технологически отделсен коллективӗнчен.

Елизавета Михайловна **Стешова**—арçын ачасен 1-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗнчи преподавательсен коллективӗнчен.

Анна Викентьевна **Жук** — пир-авӑр фабрики çумӗнчи ОРС-ра ӗçлекен служащисен коллективӗнчен.

Лев Николаевич **Кинишенцев**—ЧАССР Совнаркомӗ çумӗнчи лесоохранӑпа лесонасаждени управленийӗн коллективӗнчен.

Мария Михайловна **Гуцина**—«Буревестник» спорт обществинчен.

Александр Александрович **Дуняк**—Чӑвашсен государство академи театрӗнчи актерсен коллективӗнчен.

11-МӖШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийӗн председателӗ Анна Ивановна **Рычкова**—пир-авӑр фабрикинчи парти организацийӗнчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Мария Семеновна **Данилова**—хӗрачасен 1-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗнчи преподавательсен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн секретарӗ Анфиса Никитична **Волкова** — Чӑваш вӑтам шкулӗнчи парти организацийӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Александр Матвеевич **Андреев**—Спецбанксенчи парти организацийӗнчен.

Мария Михайловна **Свинцова** — Шупашкарти çыхӑну конторинчи телеграф работникӗсен коллективӗнчен.

Анна Васильевна **Маландина**—ВКП(б) Обкомӗ çумӗнчи партшкулта ӗçлекен преподавательсемпе служащисенчен.

Зинаида Прокофьевна **Гуськова**—Водопьянов ячӗпе тӑракан тир-сӑран комбинатӗнчи рабочисемпе служащисенчен.

Зоя Николаевна **Крупина**—пӗр заводри транспорт цехӗнче ӗçлекен рабочисемпе служащисенчен.

Александр Иванович **Нешин**—пир-авӑр фабрикинчи рабочисемпе служащисенчен.

12-МӖШ УЧАСТОК

Участокри суйлав комиссийӗн председателӗ Иван Семенович **Васильков**—СССР Госпланӗн Чӑваш республикинчи уполномоченнӑйӗ патӗнче ӗçлекенсен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Татьяна Петровна **Воробьева**—арçын ачасен 1-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗнчи учительсен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн секретарӗ Вера Николаевна **Сафонова**—СССР Госпланӗн Чӑваш республикинчи уполномоченнӑйӗ патӗнче ӗçлекенсен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комиссийӗн членӗсем:

Августина Васильевна **Лысенина** — Чӑвашсен государство пединститутӗнчи комсомол организацийӗнчен.

Зинаида Александровна **Благоразумова** — 1-мӗш номерлӗ типографири рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Михаил Константинович **Залетаев** — пӗр заводри плановӑй отделра ӗçлекен рабочисемпе служащисенчен тата инженерсемпе техниксенчен.

Федосия Давыдовна **Гинцель**—арçын ачасен 1-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗнчи учительсен коллективӗнчен.

Елена Романовна **Трофимова**—Ленинград урамӗнчи урам комитетӗнчи килхуçи хӗрарӑмӗсен активӗнчен.

Иван Тимофеевич **Можаев** — хулари пожарнӑй охранӑра ӗçлекенсен коллективӗнчен.

(Юлашки пулать).

Э. Бевин господин Мускава килнӗ

Декабрӗн 15-мӗшӗнче Мускава Великобританин ют çӗршыв ӗçӗсен министрӗ Э. Бевин господин килнӗ. Э. Бевин господинпа пӗрле ют çӗршыв ӗçӗсен министрӗн яланхи заместителӗ А. Кадоган господин, Великобританин ют çӗршыв ӗçӗсен министерствин ответлӑ сотрудникӗсем Р. Кемпбелл, Д. Диксон, Стернбейл Беннетт, В. Хейтер, Д. Уорд господинсем килнӗ.

Центральнӑй аэродромра Э. Бевин господина СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ А. Я. Вышинский, СССР Наркоминделӗн ответлӑ сотрудникӗсем Ф. Ф. Молочков, В. Я. Ерофеев, В. Г. Трухановский, çавӑн пекех тата Великобританин СССР Союзӗнчи посольствин А. Керр господин ертсе пыракан членӗсем, США посолӗ А. Гарриман господин, Китай посолӗ Фу Бин-чан господин, Франци посолӗ Ж. Катру генерал, Австри посланникӗ Д. Малоней господин, Çӗнӗ Зеланди посланникӗ Ч. Босвелл господин, Канада ӗçӗсен поверенннӑйӗ Мейранд господин кӗтсе илнӗ.

Аэродрома Британипе Совет ялавӗсене çакса илемлетнӗ.

Çав кунах Мускава Британин Иранри посолӗ Р. Буллард господин килнӗ.

В. М. Молотов Бирнс господинпа калаçни

Декабрӗн 15-мӗшӗнче СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Государство Секретарӗпе Д. Бирнс господинпа калаçнӑ.

Калаçнӑ çӗрте СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ А. Я. Вышинский тата США Посолӗ В. А. Гарриман господин пулнӑ.

В. М. Молотов Бевин господинпа калаçни

Декабрӗн 15-мӗшӗнче СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов Великобританин Ют çӗршыв Ӗçӗсен Министрӗпе Э. Бевин господинпа калаçнӑ.

Калаçнӑ çӗрте СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ А. Я. Вышинский, Британи Посолӗ А. К. Керр господин тата Ют çӗршыв Ӗçӗсен Министрӗн Яланхи Заместителӗ А. Кадоган господин пулнӑ.

Çĕршыв СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет

Участоксенчи суйлав комиссийĕсене çирĕплетсĕ

ИШЛЕЙ РАЙОНĔНЧЕ

Ĕçсынни депутачĕсен Ишлей райсовет исполкомĕ районри участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне çирĕплетнĕ. Районра мĕн пурĕ 23 суйлав участокĕ тунă. Участоксенчи суйлав комиссисен составне обществăллă организацисемпе ĕçсыннисен пухăвĕсем тăратнă кандидатсене çирĕплетнĕ. Вĕсен хушшинче: Анатолий Андрианович Воронцов—пуçламĕшпе вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн районри организацийĕнчен, Васса Николаевна Николаева—культпросвет учрежденийĕсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн районри организацийĕнчен, Лариса Петровна Андреева—районри коммунистсен организацийĕнчен, Лазарь Захарович Васильев—Жуков ячĕпе тăракан колхозри колхозниксенчен, Анна Осиповна Осипова—Пĕтĕм Союзри çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн районри организацийĕнчен, Вера Кузьминична Егорова—Медсантруд профсоюзĕн районри организацийĕнчен тата ыттисем те.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсем ĕçе тытăнаççĕ. Кашни суйлав участокĕ çумĕнчех агитпунктсем организациленĕ.

Вулав çурчĕсем СССР Верховный Советне суйлас ĕçре

СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленес тĕлĕшпе Шупашкар районĕнче вулав çурчĕсен заведующийĕсем, библиотека работникĕсем, колхоз клубĕн заведующийĕсем тата культура çуртĕн работникĕсем валли район центрĕнче 2 семинар пулса иртрĕ. Семинар хыççăн СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленес тĕлĕшпе Чăкăр ял Советĕнчи вулав çурчĕ аван ĕçлеме тытăнчĕ. Вулав çурчĕн заведующийĕ Петрова комсомолка суйлав законне вĕренме çамрăксем валли кружок организациленĕ. Унта 20—25 çамрăк çÿреççĕ. Вулав çуртĕнче суйлав Положенине вĕренме пулăшас майпа витрина организациленĕ. Районри библиотекăра та ятарласа выставка тунă. Агитаторсем валли литература хатĕрленĕ. Суйлав Положенине вĕренес тĕлĕшпе райцентрта килхуçи хĕрарăмĕсемпе икшер хут занятии туса ирттернĕ. Кружок занятийĕсем йĕркеллĕ иртеççĕ.

Анчах та пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те нумай-ха. Хăшпĕр вулав çурчĕсем хăйсен ĕçне тивĕçлипе туса пымаççĕ. Вулав çурчĕсен ĕçне çак кунсенчех лайăхлатмалла, СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленес ĕçе вĕсем тивĕçлипе туса пымалла.

В. ДАНИЛОВА.
Шупашкар райсовет исполкомĕн культпросвет отделĕн заведующийĕ.

РСФСР-тан Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Горький округĕнчи Суйлав Комиссийĕ ПĔЛТЕРНИ

РСФСР-тан Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Горький Округĕнчи Суйлав Комиссийĕ Горький хулинчи Кремльте вырнаçнă. Унăн адресĕ çапла: гор. Горький. Кремль, дом Советов, 4-ый этаж, комната 131. Телефонсем: 3-57-47 тата 3-25-10.

Государствăна—тырă

МУРКАШ, декабрĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем государствăна обязательнăй йĕркепе тырă памалли плана тултарнă хыççăн планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 450 тонна тырă пама пулчĕç. Паянхи куна çак фонда 300 тонна ытларах тырă панă.

Хĕрлĕ Çар фондне тырă парас ĕç «Искра», «Красное Сормово», «Восток», «Красный Октябрь» колхозсенче ăнăçлă пырать. Çак колхозсем планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне кашниех 700—800 пăт тырă панă.

«Маяк» колхоз членĕсем йышăннă тăрăх, Хĕрлĕ Çар фондне унăн планран ирттерсе 70 центнер памалла. Колхоз председателĕ Воинова юлташ 62 центнер леçтернĕ те юлашкине çак вăхăтчен те паман. Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем октябрь уйăхĕнчех Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 25 центнер тырă пама йышăннă. Колхоз председателĕ Краснов юлташ колхозниксен йышăнăвне пурнăçламан—паян кунччен те пĕр килограмм тырă та яман.

* * *

ШĂМĂРШĂ, декабрĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри нумай колхозсем государствăна тырă парса татнă. Кивĕ Шăмăршă ял Советĕнчи «Динамо», «Новая деревня», Пуянкасси ял Советĕнчи «Заря», Васанти «Победа» колхозсем планран ирттерсе çĕршер пăт тырă Хĕрлĕ Çар фондне леçрĕç. Малта пыракан колхозсем пурĕ 4000 пăта яхăн планран ирттерсе тырă панă.

Анчах та район государствăна тырă парас енĕпе çаплипех юлса пырать: плана 65 процента яхăн кăна тултарнă.

«Красный партизан» колхозра государствăна тырă вăхăтра парса татайманнине туртăм вăйĕ çитменни çине йăвантараççĕ, çав вăхăтрах ĕнесемпе тырă турттарассине кунта организацилемен. «Светлый путь» колхозра авăн çапассине йĕркелемен, çавна пула государствăна тырă парас ĕç те начар пулса пырать.

* * *

Чурачăк районĕнчи Ямаш ял Советĕнчи «Новый путь» колхоз (председателĕ Г. Анисимов юлташ) районра чи малтан государствăна тырă, çĕрулми тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем парса татрĕ, планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 250 пăт тырă пачĕ. «Новый путь» колхоз государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене те пĕтĕмпех пурнăçланă. Аш-какай памалли плана 1946 çулшăн та парса татнă. Колхозăн халĕ государство умĕнче нимĕнле парăм та çук. Колхозниксемпе колхозницăсем халĕ хĕрсех çуракине хатĕрлеме тытăнчĕç. Вăрлăхсене сортлаççĕ, машинăсемпе ялхуçалăх инвентарĕсене юсаççĕ тата хире тислĕк кăлараççĕ.

А. ИВАНОВ.

Заводри ăмăрту итогĕсем

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри профсоюз комитечĕпе заводоуправлени цехсемпе коллективсен тата бригадăсен ноябрь уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухнă.

Цехсем хушшинче пыракан ăмăртура пĕрремĕш вырăна рессорсемпе пружинăсем тăвакан цех коллективĕ йышăннă. Вăл ноябрь уйăхĕнчи плана 115,5 процент тултарса, рабочисен ĕç тухăçлăхне 214 процента çити ÿстернĕ. Цех коллективĕ унччен илнĕ куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялава унтах хăварма йышăннă.

Иккĕмĕш вырăна ремонтно-механически цех коллективĕ тухнă. Цех рабочисен ĕç тухăçлăхне 265 процента çити ÿстерсе, уйăхра плана 109,6 процент тултарнă.

Виççĕмĕш вырăна, уйăхри производство планне 143,2 процент тултарса, ремонтно-утилизационнăй цех коллективĕ йышăннă. Цех рабочисен ĕç тухăçлăхне 226 процента çити ÿстернĕ.

Сменăсем хушшинче пыракан ăмăртура, уйăхри задание 130 процент тултарса, пĕрремĕш вырăна ремонтно-утилизационнăй цехри тимĕрçĕсен смени тухнă. Смена коллективне куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялав памалла тунă.

Бригадăсем хушшинчи ăмăртура чи малти вырăна Чесов юлташ ертсе пыракан бригада йышăннă. Бригада уйăхри плана 185 процент тултарса, планран ирттерсе 11 вагон юсанă. Куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялава çак бригадăрах хăвармалла тунă.

Комсомолецсемпе çамрăксен бригадисенчен уйрăмах Волкова юлташ ертсе пыракан шлифовщиксен бригади лайăх ĕçленине палăртнă. Бригада ĕç тухăçлăхне 208 процент ÿстерсе, уйăхри плана 149,5 процент тултарнă. Куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялава вĕсенчех хăварнă.

Цехсем хушшинче пыракан ăмăртура вагонсем тăвакан цехпа (начальникĕ Белов юлташ) тимĕрçĕсен цехĕ (начальникĕ Новиков юлташ) кая юлса пынине палăртнă. Асăннă цехсенче рабочисен ĕç дисциплинине тивĕçлĕ вырăнта мар, цехсем уйăхри производство планне те тултарайман.

Е. ЯНДАШЕВА.

Вăрман хатĕрлевĕнчи стахановецсем

Милютинăри механизациленĕ вăрман пунктĕнче ĕçлекенсем, СССР Верховный Советĕн суйлавне ĕçре пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илес тесе, вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе илнĕ хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ.

Ăмăртура Пихтулино участокĕнчи (заведующийĕ Тимофеев юлташ) вăрман турттаракансем малта пыраççĕ. Ку участокра вăрман турттаракансем Семен Урванцев, Алексей Химич тата Белал Карипов хăйсен ĕç тухăçлăхне куллен ÿстерсе пыраççĕ. Декабрĕн 7-мĕшĕнче Урванцев юлташ трасса çине, планпа 10 метр йывăç турттарса тухас вырăнне, 43 метр, Химичпа Карипов юлташсем кашниех 38 метр йывăç турттарса кăларнă.

Декабрĕн 8-мĕшĕнче вара Семен Урванцев 48 метр, Химичпа Карипов кашниех 39-шар метр турттарса тухнă. Декабрĕн 10-мĕшĕнче вĕсем хăйсен ĕç тухăçлăхне татах та ÿстернĕ. Çак кун вĕсем пысăк çитĕнÿ тунă: Урванцев 68 метр, Кариповпа Химич кашниех 54 метр турттарса кăларнă.

А. ИВАНОВ.
Заводри партбюро секретарĕ.

Нимĕçсен вăрçă пуçланăшăн айăплă тĕп преступникĕсене Нюрнберг хулинче суд туни

Декабрĕн 13-мĕшĕнчи каçхи лару

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 13-мĕшĕнчи каçхи ларура Америка айăплаканĕсен представителĕ Додд хăйĕн сăмахне малалла каланă. Вăл фашистсем тунă концентрациллĕ лагерьсенчи лару-тăрăва кăтартса паракан документсене вуласа парса, вĕсене трибуналăн протоколĕсем çумне хушнă. Çав документсенчен хăшпĕрисене Америкăн çарпа юстицин следстви органĕсем, Америка çарĕ концентрациллĕ лагерьсем пулнă районсене йышăнса илнĕ хыççăн тупса хатĕрленĕ. Вăл документсене тивĕçлипе ĕнентернĕ, вĕсене суд протоколĕсем çумне хушаççĕ.

Айăплакан Америкăн 3-мĕш çарĕн командующийĕ хушнă тăрăх çырнă пĕр документа вуласа парать. Унта Флосенбургри концентрациллĕ лагере хупса лартнă çынсем мĕнле пурăнни çинчен çапла каланă: «Ку лагерьте пуринчен ытларах çĕр айĕнче ĕçленĕ. Кунта çĕр айĕнче фабрикăсем тата ытти çуртсем тунă. Санитари тĕлĕшĕнчен питĕ йывăр условисенче ĕçленĕ пирки, çуртĕр тĕлĕшĕнчен пачах та юрăхсăр условисенче пурăннă пирки, лагерьте лараканнисене тискеррĕн тытса усранă пирки кунта кашни кунах 100-шер çын вилнĕ. Оберштацблингри концентрациллĕ лагере 1945 çулхи февраль уйăхĕнче 700 çын илсе пынă. 1945 çулхи апрелĕн 15-мĕшĕ тĕлне вара кунта пĕтĕмпе те 405 çын çеç юлнă. Флосенбурга ирĕке кăлараччченхи 12 уйăх хушшинче унти лагерьте 14.739 арçынпа 1.030 хĕрарăм вилнĕ. Ку шута çакса е персе вĕлернисем кĕмеççĕ. 1941 çулта ку лагерьте 2.000 вырăс çынни пулнă. Вĕсенчен 102 çын çеç чĕрĕ тăрса юлнă. Флосенбургри концентрациллĕ лагере вилĕм лагерĕ тесе калама пулать. Çак лагере ĕнтĕ чурасен вăйĕпе усă курас шутпа çеç мар, тата çынсене вĕлерсе пĕтерес шутпа та тунă. Выçлăх, хĕнесе асаплантарни, медицина тĕлĕшĕнчен пулăшу паманни, çакса вĕлерни, шăнтса лартни, условисене чăтаймасăр çынсем хăйсене хăйсем вилни, персе пăрахни тата ыттисем те—çак палăртнă тĕллеве пурнăçа кĕртмелли тĕп меслетсем пулнă. Кунта кашни кунах наркăмăш ярса е персе пăрахса вĕлернĕ. Тифпа сивчир çав тери хăвăрт саралса пынă, çав чирсене хирĕç кĕрешес тесе никам та нимĕн те туман. Çын пурнăçне кунти лагерьте нимĕн чухлĕ те хакламан. Асаплантарни йăлана çав тери çирĕп кĕнине пула, кунта хăвăрт вилнине ăнсăртран пулакан тĕслĕх вырăнне хунă. 1944 çулхи раштав уйăхĕн лагерьте ларакан нумай çынна пĕр вăхăтрах çакса вĕлернĕ. Лагерьти ытти çынсен вара вĕсене мĕнле çакса вĕлернине пăхса тăмалла пулнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах кăшт аяккарахра илемлетнĕ елка ларнă. Вара лагерьте ларакансенчен пĕри çапла каланă: «Мĕнле хăрушă комбинаци—кунта çынсене çакса вĕлермелли, лере—раштав елки», тенĕ. Март е апрель уйăхĕнче американецсен е акăлчансен 13 парашютистне çакса вĕлернĕ. Нимĕçсем вĕсене кĕпере сирпĕнтерсе яма хăтланнă чухне тытнă пулнă».

Гитлеровецсем тунă концентрациллĕ лагерьсен системине, тесе калать айăплакан, питĕ тĕплĕн шутласа тунă. Вĕсене гитлерла режимăн тăшманĕсене тата «кĕçĕн расса» текен халăх çыннисене пĕтерме тунă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах çак система ытти çĕршывсене хирĕç фашистла агресси хатĕрлеме пулăшнă. Çав концентрациллĕ лагерьсенче, пĕр енчен, мире хирĕç гитлерла каварăн тăшманĕсене пĕтернĕ, тепĕр енчен, çав лагерьсем Германин çар промышленноçĕ валли чурасем парса тăнă. Çав лагерьсенче çынсене тăтăшах вĕлернине пула, унта пĕр-пĕр уйрăм преступление илсе каласа пама та йывăр. Гитлеровецсем лагерьте ларакан çынсене пĕр-пĕринпе ăмăртса çĕнĕрен те çĕнĕ майсемпе асаплантарнă.

Айăплакан тыткăна лекнĕ Андреас Пфахенбергер каласа пани тăрăх çырнă документа вуласа парать. Унта çапла каланă: «1939 çулта Бухенвальдри концентрациллĕ лагерьте ларакан татуировкăллă пур çынсене те врач патне кайса çырăнма хушрĕç. Çакна мĕншĕн тунине никам та пĕлмен. Анчах та татуировкăллă çынсене çырнă хыççăн, пĕринчи илемлĕ татуировкăллине—диспансера илсе кайса наркăмăш ярса вĕлерчĕç. Çак вилнĕ çын уголовнăй айăпшăн тĕрмене лекнĕ Карл Бегс пулнă. Унтан унăн татуировкăллă ÿтне сĕвсе илнĕ те, хăйне май тир тунă. Вара çак татуировкăллă ÿт татăкне СС штандартенфюрерĕн Кохăн арăмне панă, лешĕ вара унран абажур тунă».

Çакна çирĕплетсе кăтартас шутпа, айăплакан трибунала этемĕн татуировкăллă ÿчĕн татăкне тата çакса вĕлернĕ çыннăн врачсем хăйне уйрăм майпа пĕчĕклетнĕ пуç каптакине парать. Кĕленче ăшне хунă çын пуçне сĕтел çине лартса трибунала кăтартаççĕ.

Кун хыççăн Америка айăплаканĕсен представителĕ гитлеровецсем еврей халăхне пĕтерес тĕлĕшпе мĕнле политика тытса пынине кăтартакан документсене вуласа пама тытăнать. Айăплакан çапла калать: ку политика ĕнтĕ гитлерла Германин руководителĕсем теори тĕлĕшĕнчен те, политика тĕлĕшĕнчен те панă кăтартусемпе пĕтĕмпех килĕшÿллĕ пулса пынă, тет.

Гитлеровецсем влаçа тытса илнĕ хыççăнах еврейсене хирĕç темиçе декрет кăларнă. Çав декретсене пурне те Геринг е Фрик, Гесс е Борман, е тата Нейрат алă пуснă. 1938 çулта, Германи чиновникне Парижра вĕлернĕ хыççăн, гитлеровецсем Германире еврейсене хирĕç питĕ вăйлă кампани пуçласа янă.

Айăплакан çапла калать: Юлиус Штрейхер, Ганс Фрик, Генрих Гиммлер, Роберт Лей 1933 çулта еврейсене хирĕç тунă центрти комитетăн членĕсем пулнă. Айăплакан çавăн пекех тата трибунал протоколĕсем çумне Розенбергăн «Тĕнчери вăрçă. Еврей халăхĕ ĕлĕк тата халĕхи вăхăтра» ятлă кĕнекине хушса хурать. Айăплакан Розенберг архивĕнче тупнă пĕр документа—Белоруссипе Украинăри еврейсене мĕнле тыткаламалли çинчен калакан инструкцие хушса хурать. Çав инструкцире еврейсен геттине тума, еврейсене уйăрмалла пултăр тесе вĕсене хул çинче сарă тутăр çыхса çÿремелле тума, еврейсене общество пурнăçĕнчен пĕтĕмпех хăтарма, вĕсене ирĕксĕрлесе ĕçлеме яма тата ытти майсемпе те хĕсĕрлеме хушнă.

Çакăнпа каçхи лару хупăнать.

Декабрĕн 14-мĕшĕнчи ирхи лару

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Трибуналăн декабрĕн 14-мĕшĕнчи ирхи ларăвĕнче айăплакансен представителĕсен ĕçне хÿтĕлекенсем хирĕçленине пăхса тухса чылай вăхăт ирттернĕ. Кальтенбруннера хÿтĕлекенĕ свидетельсене трибунал ларăвне чĕнсе килме сĕнет. Кунта, вара вĕсенчен айăплакансем те, хÿтĕлекенсем те ыйтса пĕлме пултараççĕ, тет.

Америкăн главнăй айăплаканĕ Джексон Кальтенбруннера хÿтĕлекенĕ каланине хирĕçлет. Унăн сăмахĕ тăрăх, хÿтĕлекен сĕннипе килĕшсен, суд процесĕ çичĕ çул пыма пултарать, мĕншĕн тесен гитлерла преступниксен жертвисем миллионшар шутланаççĕ, вĕсем пĕтĕм Европăна саланса пĕтнĕ. Трибунал уставне кăтартса парса, Джексон çапла калать: трибуналăн процессуальнăй йĕркен технически формальноçĕсемпе хăйĕн ĕçне çыхăнтарса лартмалла мар.

Совет Союзĕн айăплаканĕсен представителĕ Руденко генерал Джексон каланипе килĕшет.

Англи айăплаканĕсен представителĕ те Джексон каланипе килĕшет. Франци айăплаканĕсен представителĕ Джексонпа Руденкон сăмахĕсемпе тĕпренех килĕшет.

Ун хыççăн Кальтенбруннера, Бормана тата Папена хÿтĕлекенсем тухса калаççĕ. Трибунал председателĕ хÿтĕлекенсем ыйтнине пăхса тухма сăмах парать.

Çакăн хыççăн Америка айăплаканĕсен представителĕ Уолш майор сăмах калама тытăнать. Хăйĕн сăмахĕнче вăл гитлеровецсем Европăра еврей халăхне хирĕç тунă преступленисене тăрă шыв çине кăларать. Вăл 1942 çулхи августăн 24-мĕшĕнче айăпланакан Франк хăйĕн дневникне мĕн çырнине вуласа парать: «Эпир 1.200 пин еврее выçăхтарса вĕлерме шутларăмăр». Айăплакан кăтартса паракан ытти нумай документсем çавăн пек шутланине гитлеровецсем ăçта тата мĕнле майпа пурнăçа кĕртсе пынине кăтартса параççĕ.

Анчах та гитлеровецсем çынсене пĕр выçăхтарнипе çеç çырлахман. Айăплакан Варшавăра еврейсен геттине пĕтерсе тăкма Гитлер приказ панине кăтартса паракан документа вуласа парать. Çав приказа пурнăçа кĕртсе, СС отрячĕсем, хăрушсăрлăх полицийĕ тата хăрушсăрлăх службы поляксен столицинчи пĕр пысăк районри еврей халăхне пĕтерсе тăкнă.

Гитлерла каварлашуçăсем еврей халăхне вĕлерсе пĕтерни çинчен калакан материалсене трибунала парса пынă май, айăплакан Уолш çапла калать: çакна пурнăçа кĕртме фашистсем еврей халăхне яланах тенĕ пек геттона вырнаçтарнă. Вĕсем еврей халăхне тÿррĕнех тата питĕ кĕске вăхăтра пĕтерсе тăкнă. Айăплакан трибунала СС организацийĕсем Каунасра туса ирттернĕ погром çинчен калакан отчета тăратать. Çав отчетран акă мĕн куранса тăрать: Каунасра пĕр каçрах 1.500 çынна тата 60 çурта пĕтерсе тăкнă. Тепĕр каçхине вара татах 2.300 çынна вĕлернĕ. Гитлеровецсем мĕнпур Литвапа Латвире тата хăйсем оккупациленĕ ытти районсенче те çавăн пекех хăтланнă. Анчах та, тесе калать малалла айăплакан, гитлеровецсен ирсĕрлĕхĕ çынсене массăллăн вĕлерес ĕçре «газ вагонĕсемпе»—газ автомобилĕсемпе усă курма тытăнсан татах та вăйлăнрах палăрнă. Айăплакан вуласа панă икĕ документран гитлеровецсем çынсене çакăн пек майпа мĕнле пĕтернин техникине питĕ тĕплĕ кăтартса парать.

Айăплакан малалла трибунала Минск тĕрмин коменданчĕ пулнă Гюнтерăн çырăвне парать. Çав документ ĕнтĕ гитлерла захватчиксем уголовнăй çынвĕлеренсемпе çаратуçăсем пулнине кăтартса парать. «Еврейсене хирĕç мĕнле ĕçлемелле» тесе ят панă çырура çапла каланă: «1943 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕ хыççăн хăрушсăрлăх службин тĕрминче нимĕçсемпе вырăс еврейĕсене 516 çынна вĕлернĕ. Вĕсен çăварĕнчи ылттăн ăпаласене икĕ операци туса кăларса илнĕ. Еврейсен 60 процентне яхăн ылттăн шăлсемпе коронкăсем пулнă. Штурмфюрер Хауб операци тунă чухне яланах хăй пулатчĕ те, ылттăна хăй илетчĕ».

Хĕвелтухăçĕнчи пекех, тет айăплакан, гитлеровецсем мĕнпур Европипе еврейсене нимĕн хĕрхенмесĕр вĕлернĕ. Хăйĕн сăмахне тÿрре кăларас шутпа, вăл Голланди правительствин отчетне илсе кăтартать. Çав отчетра гитлеровецсем Голландирен 117.000 еврее ирĕксĕрлесе илсе тухса кайни çинчен каланă.

Гитлерла каварлашуçăсем, тет Уолш, гитлеровецсем çĕнтерсен-çĕнтермесен те еврей халăхне тĕппипех пĕтерме шут тытнă. Вăл Радом облаçĕнчи хăрушсăрлăх комиссарĕ пулнă Ильмер темĕнле Тиль ятлă çын патне янă çырăвăн пĕр вырăнне вуласа парать. Çав çырура еврейсене май килнĕ таран хытăрах тытма хушнă. Кунта çапла каланă: кĕскен ыйтса пĕлнĕ хыççăнах вĕсене концентрациллĕ лагерьсене ямалла, фронтра лару-тăру шанчăксăрлансан, вĕсене пурне те вĕлермелле, виллисене пĕтерсе тăкмалла.

Ку ыйту тĕлĕшĕпе тивĕçлĕ материалсене трибунала парса пĕтернĕ хыççăн, айăплакан Уолш гитлеровецсем концентрациллĕ лагерьсенче мĕн чухлĕ еврей халăхне вĕлерсе пĕтерни çинчен каласа парать. Сăмахран, Освенцимра 1944 çулхи июль уйăхĕнче гитлеровецсем кашни кун 12.000-шер çын вĕлернĕ. Ку тĕлĕшпе гитлеровецсем патĕнче чылай тĕплĕнрех калакан статистика документĕсене тупнă. 1941 çулта айăпланакан Франк хăйĕн дневникĕнче çапла çырса хунă: генерал-губернаторствăра 3.500 пин еврей пурăнать, тенĕ. Польшăра виçĕ çул хуçаланнă хыççăн Франк хăйĕн дневникĕнче: генерал-губернаторствăра 100.000 еврей çеç юлчĕ, тесе çырса хунă.

Юлашкинчен Уолш Хестель доктор çырса каласа панине вуласа парать. Хестель доктор çапла çырнă: гитлеровецсем концентрациллĕ лагерьсенче 4 миллион еврее вĕлернĕ тата 2 миллион еврее урăх майсемпе вĕлернĕ.

Декабрĕн 14-мĕшĕнчи ирхи лару çакăнпа хупăнать.

БЕЛЬЗЕНРИ КОНЦЕНТРАЦИЛЛĔ ЛАГЕРЬТЕ ĔÇЛЕНĔ ГИТЛЕРЛА 11 ПАЛАЧА ВĔЛЕРНĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: ĕнер Бельзенри гитлерла концентрациллĕ лагерь коменданчĕ пулнă Крамера тата унпа пĕрле Люнебургра суд туса вĕлермелле приговор йышăннă 10 айăпланакана çакса вĕлернĕ.

ИСПАНИ ГЕРМАНИ ЫЛТТĂННЕ АНГЛИПЕ АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ШТАТСЕНЕ ПАНИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Испани Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Англи посольствисене, репараци тĕлĕшпе ĕçлекен комиссин довереннăй çыннисем пулса ĕçлекенскерсене, 1.220.000 доллар ылттăн панă. Çав ылттăн Германи правительствин пулнă.

Финляндири вăрçă преступникĕсене суд туни

ХЕЛЬСИНКИ, декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 12-мĕшĕнче Финляндири вăрçă преступникĕсене суд тăвакан судăн ларăвĕнче çапла айăпланакан Рютин сăмахне итленĕ. Рюти тем тусан та айăпласа çырнă актра кăтартнă фактсем çинчен тата суда тăратнă документсем çинчен пĕрре те асăнмасть.

Декабрĕн 13-мĕшĕнче Рюти хăйĕн сăмахне вуласа пĕтернĕ. Вара суд председателĕ айăпланакан Рютирен çапла ыйтнă: эсир Гитлертан 1941 çулхи июлĕн 26-мĕшĕнче çырнă çыру илнĕ. Çав çырура мĕн каланă? Халĕ çав çыру ăçта? тенĕ. Рюти, хĕрелсе кайса, ним йĕрки-паллисĕр сÿпĕлтетсе, çакăн пек ответ панă: çырура мĕн каланине эпĕ халĕ астумастăп, çав çыру ăçтине те пĕлместĕп, тенĕ.

Тĕп айăплакантан Тарьяннерен суд председателĕ çапла ыйтнă: Рюти сăмахĕ пирки эсир мĕн те пулин калас теместĕр-и, тенĕ. Тĕп айăплакан çакăн пек ответленĕ: Рюти сăмахĕ пирки эпĕ хамăн шухăшсене çав сăмахпа тĕплĕн паллашнă хыççăн каласа парăп, тенĕ. Рютие хÿтĕлекен Прокопе судран Стокгольм хулинче Финлянди посланникĕ пулса ĕçленĕ Васашерни свидетеле чĕнтерме ыйтнă.

ЯВА УТРАВĔ ÇИНЧИ ЛАРУ-ТĂРУ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио çапла пĕлтерет: Англи командованийĕ Ява утравĕ çинче пысăк çапăçусем туса ирттерме хатĕрленет, анчах та вăл питĕ вăрттăн хатĕрленет. Çав çапăçусене ирттерме хатĕрленнине акăлчансем çапла ăнлантарса параççĕ: эпир илнĕ хыпарсем тăрăх, Ява утравĕ çинче çак кунсенче пĕтĕмĕшле восстани пуçланса каймалла, теççĕ.

Стамбулри демонстраци çинчен

Декабрĕн 4-мĕшĕнче Стамбулра студентсем, çар училищисемпе лицейсенче вĕренекенсем тата ытти тĕрлĕ темиçе пин çын тунă демонстраци çинчен пирĕн хаçатсенче çырса пĕлтернĕччĕ. Çав демонстраци вăхăтĕнче Стамбулри демократиллĕ мĕнпур хаçатсен çурчĕсене аркатса тăкнă. Çавăн пекех тата совет литературине тата демократиллĕ ытти кĕнеке-журналсем сутакан икĕ магазина аркатса тăкнă. Демонстраци вăхăтĕнче Совет Союзне хирĕçлесе кăшкăрнă, ун çинчен Стамбулри Турци администрацийĕн аслă представителĕсем те демонстраци хыççăн тепĕр кунне каланă.

Декабрĕн 8-мĕшĕнче СССР-ĕн Анкарари посолĕ Виноградов юлташ Турцин ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Хасан Сака господина нота ярса панă. Унта çапла каланă: Совет правительстви илнĕ сведенисем тăрăх, декабрĕн 4-мĕшĕнче Стамбулра пулса иртнĕ демонстрацире Совет Союзне хирĕçле нумай лозунгсем кăшкăрса каланă. Совет литературине сутакан икĕ магазина аркатса тăкнă, унти кĕнекесене сунтарса янă, е юрăхсăра кăларнă. Çакă ĕнтĕ çав демонстраци Совет Союзне хирĕçле демонстраци пулнă тесе шутлама май парать. Демонстрацие хутшăннă çынсене çакăн пек тăшманла ĕç тума демонстрацие хÿтĕлекен Турци полицийĕ нимĕн чухлĕ те хирĕç тăман. Нотăра малалла тата çапла каланă: Совет правительстви СССР тĕлĕшпе çакăн пек провокациллĕ ĕçсем тунине асăрхамасăр иртсе кайма пултараймасть, çавăн пек ĕçсем тупăшăн мĕнпур ответлăх Турци правительствине тивет.

Декабрĕн 11-мĕшĕнче Турци правительстви хăйĕн ответлă нотинче çапла каланă: Турци влаçĕсем ĕçе тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, Стамбулра пулса иртнĕ демонстраци вăл «чăннипех шалти демонстраци» çеç пулнă. Çав демонстраци вăл «обществăн пĕр пайĕ Турцин хăшпĕр журналисчĕсем вĕрентекен теорие хирĕçлесе йышăннине тăвăллăн кăтартса пани çеç пулса тăрать».

Татах тепĕр хут темĕнле тĕпчесе тĕрĕсленине кăтартса парса, нотăра çапла каланă: «декабрĕн 4-мĕшĕнче пулса иртнĕ демонстрацире ют çĕршывсене хирĕçлесе нимĕнле лозунгсем те кăшкăрман тата нимĕнле ĕç те туман», çавăнпа та «полици вăйĕсем айăпа кĕни çинчен, çавăн пекех тата Турци правительствин мĕнле те пулин ответлăхĕ çинчен нимĕнле калаçу та пулма пултараймасть».

Турци нотинче çавăн пекех тата ТАСС корреспонденчĕ декабрĕн 4-мĕшĕнче пулса иртнĕ демонстраци çинчен пĕлтернине хирĕçлеме хăтланса пăхнă. Совет нотинче ун пирки нимĕн те каламан пулнă.

Декабрĕн 11-мĕшĕнче Турцин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Турци правительствин нотине совет посолне панă чухне, вăл совет нотипе Турци нотин содержанийĕсене хаçатсенче пичетлесе кăларма сĕннĕ.

Çав сĕнĕве хирĕç Совет посолĕ министра çапла каланă: Турци правительстви кирлĕ тесе шутлать пулсан, декабрĕн 4-мĕшĕнче Стамбулра пулса иртнĕ демонстраци çинчен калакан совет нотипе Турцин ответлă нотине Совет правительстви хаçатсене пичетлесе кăларассине хирĕçлемест. Анчах та Совет правительствине Турци правительствин ноти килĕшмест, мĕншĕн тесен унта кĕретĕн фактсенех йышăнмасăр хирĕçлеме хăтланнă. (ТАСС).

Хаçатра пичетленсе тухнă материалсем тăрăх

«ПĂТРАНЧĂК ШЫВРА ПУЛА ТЫТАКАНСЕМ»

Кăçал октябрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн хаçатра çакăн пек ятлă статья пичетленсе тухнăччĕ. Вăл статьяра Красноармейски районри «Большевик» колхозра отчетпа учет ĕçне япăхтарса янă май ялхуçалăх артелĕн пурлăхĕпе тивĕçсĕр усă курни çинчен, ялхуçалăх ĕçне начар организацилени çинчен тата ытти чылай çитменлĕхсем çинчен те çырнăччĕ.

ВКП(б) Красноармейски райкомĕ пĕлтернĕ тăрăх, хаçатра çырнă фактсем пĕтĕмпех тĕрĕс пулнă.

Декабрĕн 3-мĕшĕнче çак ыйтăва пăхса тухса, колхозри отчетпа учет ĕçне пăтраштарса янăшăн колхоз счетоводне Тимофеева ĕçрен кăларнă тата суда парса айăплама йышăннă.

Колхоз кладовщикĕсем пулнă Ф. Пушкинпа В. Кирилловăна колхоз пурлăхне салатнăшăн суд урлă ответ тытармалла тунă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Промкооперации управленине çакăн пек работниксем кирлĕ: çĕвĕ çĕлекен промышленность тĕлĕшпе ĕçлекен инженер, трикотаж промышленноçĕ тĕлĕшпе ĕçлекен инженер, тир-сăранпа атă-пушмак промышленноçĕ тĕлĕшпе ĕçлекен инженер, сăматă промышленноçĕ тĕлĕшпе ĕçлекен инженер, капитальнăй строительство тĕлĕшпе ĕçлекен инженер, йывăç каскалас ĕçе пĕлекен инженер, вăрманпа усă курас тĕлĕшпе ĕçлекен инженер, инженер-экономист, бухгалтер-ревизор, юрисконсульт, аслă экономист-финансист, апатçимĕç промышленность ушкăнĕн руководителĕ.

Ĕçукçине калаçса татăлнă тăрăх тÿлеççĕ. 2—2

Редакци адресĕ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

Г 00670 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Тираж 16.000 экз.